❑ СЕМЕНОВА ТАТЬЯНА ИВАНОВНА






# УЯВ (ВĂЙĂ) ЮРРИСЕН ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУРНĂÇĔНЧИ ПĔЛТЕРĔШĔ

**Аннотаци:** Уяв (вăйă) юррисем чăваш халăх пурнăçĕнче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Чăвашсем уяв-вăйă юррисенче асамлă вăй-хăват пур тесе шутланă. Вĕсене тĕлсĕр юрлама юраман. Вăййа пĕлсе пуçласа тивĕçлĕ ăсатса ямалла пулнă. Вăйă (уяв) юррисем темăпа е шухăшпа çеç мар, илемлĕх мелĕсемпе те пуян. Çурхи уяв вăхăтĕнче такмак каласа ташласси ытларах вирьялсен тата анат енчисен аталаннă. Анатрисем сăвă калаççĕ, уяв юррисене тăсарах, васкамасăр юрлаççĕ. Хальхи вăхăтра пурнăç, çынсен шухăш-кăмăлĕ улшăннă май ĕлĕкхи йăласемпе уявсенчен чылайăшĕ манăça тухса пыраççĕ пулин те чăваш яш-кĕрĕмĕн вăййи сӳнмен-ха. Авалхи юрăсемпе кĕвĕсем, вăйă-уяв паянхи кунччене хăйсен ытарайми поэзине, илемне çухатмаççĕ.

**Тĕп сăмахсем**: вăйă, уяв, çинçе, похă, тапă, вăйă карти, яш-кĕрĕм, вăйă (уяв) юрри, вăйă (уяв) кĕвви, вăйă-кулă.

**Bayram Türkülerinin Çuvaş Halk Hayatındaki Önemi**

**Özet:** Bayram (eğlence) türküleri, Çuvaş halkının yaşamında önemli bir yer tutmaktadır. Çuvaşlar bayram türkülerinin büyük bir gücü bulunduğunu düşünmüşlerdir. Bu türküleri yersiz yere söylemek uygun değildir. Oyunu bilip uygun şekilde eşlik etmek gerekirmiş. Oyun türküleri yalnızca konu ve düşünce bakımından değil, estetik teknikler bakımından da zengindir. Bahar aylarındaki bayram vaktinde *takmak* söylemek daha ziyade Viryaller ve Anatyençilerde gelişmiştir. Anatriler şiir söylerler, bayram türkülerini uzatarak, acele etmeden söylerler. Bugün yaşam, insanların aklını ve gönlünü değiştirdiği için eski gelenekler ile bayramlardan pek çoğu unutuluyorsa da Çuvaş gençliğinin eğlencesi silinmemiştir. Eski türküler, ezgiler ve bayramlar bugüne kadar kendi büyüleyici şiirini, güzelliğini kaybetmemiştir.

**Anahtar Kelimeler**: Oyun, Bayram, şinşe, Pohĭ, Tapĭ, Vĭyĭ Karti, Yaş-Kĭrĭm, Bayram Türküsü, Bayram Ezgisi, Vĭyĭ-Kulĭ.

**The Importance of Festive Folk Songs in Chuvash Public Life**

**Abstract**: Festive (entertainment) folk songs play an important role in the life of Chuvash people. Chuvash people have thought that festive folk songs have great power. It is inappropriate to sing them redundantly. It is necessary to know the dance and accompany it appropriately. Dance folk songs are rich in terms of not only subject and thought but also aesthetic techniques. To sing takmak during festive times in the months of spring is developed rather in Viryal and Anatyenci. Anatri recite poems and sing the festive folk songs at length and without haste. Even though many of old traditions and festives are forgotten due the fact that life today changes people's mind and heart, the entertainment of Chuvash youth has not been erased. Old folk songs, melodies and festives have not lost their fascinating poetry and beauty.

**Key Words**: Dance, Festive, şinşe, Pohĭ, Tapĭ, Vĭyĭ Karti, Yaş-Kĭrĭm, Festive Song, Festive Song, Vĭyĭ-Kulĭ.

**«Вăйă, уяв, çинçе, тапă, похă» сăмахсен ăнлавĕсем**




Чăваш халăхĕн сăвă-юрă пултарулăхне паянхи кунччен упранса юлма пулăшнă йăласенчен пĕри – *уяв (вăйă).* Ăна çурхи ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн, çуллахисем пуçланиччен, ятарласа ирттернĕ. Çурхи уявсем авалхи чăваш календарĕпе çуркунне кун таврăнсан (пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче) пуçланнă та утă çине е вырма тухиччен тăсăлнă. Чылай вырăнта вĕсем çимĕкрен пуçласа Питравчченех пынă. Çак йăла Н.И. Ашмарин словарĕнче те çырăнса юлнă, «Çимĕкрен чăваш хĕрĕсем вăййа тухаççĕ» – тенĕ унта (Ашмарин 1937: 158). Тутарстан тăрăхĕнчи хăш-пĕр ял çамрăкĕсем уява кăшт каярах, çуллахи Микулара (май уйăхĕн 22-мĕшĕнче), тухма пуçлаççĕ.

*Вăйă* сăмахăн пĕлтерĕшĕсем темиçе те. Ытларах ăна уяв пĕлтерĕшпе усă кураççĕ. В.К. Магницкий палăртнă тăрăх, Çинçепе Уяв пĕр япалах. «Хăш-пĕр вырăнта *Çинçене Уяв* теççĕ» (Магницкий 1881: 34). Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» «*Уяв*» сăмаха ăнлантарнă май çапла каланă: *«Уяв* – çинçе-çимĕкпе утă çи хушши, ĕççĕр вăхăт. Уяв тени уяс тени пулать; уяв тесе ахаль ирттернĕ вăхăта калаççĕ. Уяв вăхăтĕнче ним ĕç те ĕçлемеççĕ. Уява виç эрнерен ытла тумаççĕ; виç эрне тусан хыт сухана тухаççĕ. Петрав кунĕ çитерехпе çамрăк ачасем уяв калама чарăнаççĕ» (Ашмарин 1929: 172).

*Вăйă* сăмахăн тепĕр пĕлтерĕшĕ вăхăта хаваслă ирттернипе çыхăннă. «*Вăйă* тесе пĕр-пĕр урам кĕтессине выляма-кулма, кĕвĕ-сăвă калама пуçтарăннине калаççĕ» (Ашмарин 1930: 292). Ялсенчи хĕрсемпе каччăсем юрă юрласа, ташласа савăнма, хавасланма, пĕр-пĕринпе паллашма яланхи пĕр вырăна пуçтарăннă. Çур аки хыççăн яш-кĕрĕм ĕçрен кăштах пушанать, çуллахи хĕрӳ тапхăр пуçланиччен канать. Çамрăксен вăййисен тĕп тĕллевĕ вăйă-кулăпа савăнăçра кăна мар, вăл чылай тарăнрах пытарăннă. Чăвашсем тырă-пулă, пахча çимĕç ӳстерсе паракан çĕре чĕрĕ чунпа – Амапа

танлаштарнӑ. Ҫурхи вӑййӑсене Ҫӗре, Амана пӗтӗленсе юлма, пулӑшма тесе ирттернӗ. Нумай чӗлхере *вӑйӑ, выля* сӑмахсен шалта вырнаҫнӑ шухӑлӑх (эротика) пӗлтерӗшӗ пур. Вырӑс чӗлхинчи «игра» сӑмахра та пур ҫав пӗлтерӗш сӗмӗ (Йохан Хейзинга 2011: 36).

*Ҫинҫе* уявӗ акатуйсем иртсен ҫитнӗ. Ку вӑхӑтра ҫӗре хускатма, тӗкӗнме хушман. «Ҫӗр пӗтӗ», тепӗр майлӑ каласан, унӑн «ҫире пур» тесе шухӑшланӑ, ҫавӑнпа та халӑх пысӑк ӗҫе кӳлӗнмен. Ҫамрӑксем каҫсерен вӑййа тухнӑ. Г.И. Комиссаров тӗпчевҫӗ кун пирки ҫапла ҫырать: «Анатри чӑвашсем ҫӗр пӗттине уявласа ирттернӗ праҫнике «*уяв*» (почитание), тури чӑвашсем «*Ҫинҫе*» («ҫийӗнче», ҫие юлни» тесен тӗрӗсрех пулать) тенӗ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн «уяв» сӑмаха куҫӑмлӑ пӗлтерӗшпе «ҫамрӑксен вӑййисем» теме пуҫланӑ» (Комиссаров 2003: 93).

Ҫинҫе – ҫуркуннерен ҫӑва кӗнӗ вӑхӑт. Ӑна икӗ эрне уявлаҫҫӗ. Ҫинҫе йӑли *уяв-вӑйӑ-тапӑ* йӑлисемпе тӳрремӗн ҫыхӑнман. Ыраш шӑркана ларнӑ чухнехи чи вӑрӑм кунсене чӑвашсем Ҫӗр пӗтӗ пулнӑ вӑхӑт тесе шутланӑ, ҫавӑнпа та «ҫийӗнче пур», пӗтӗ ҫӗре кансӗрлес мар тесе хӑйсене хӑйсем асӑрханса, уяса тӑнӑ, ҫӗре хускатман.

Чӑваш чӗлхеҫисем В.Г. Егоров тата М.Р. Федотов уяв термина вырӑсла «соблюдение» тесе куҫараҫҫӗ, вӑл уя «блюсти» сӑмахран пулса кайнӑ тесе ӑнлантараҫҫӗ (Егоров 1964: 208), (Федотов 1996: 298).

Анатри чӑвашсем ур тӑрӑхӗсенчи вырӑссемпе хутшӑнса пурӑнма тытӑнсан вӗсен уявӗсене йышӑнма пуҫланӑ. Ку тӑрӑхри ҫамрӑксем вырӑссенчен вӑйӑ карти (хоровод) йӑлине вӗренсе юлнӑ. Хирти (анатри) чӑвашсем вырӑс «хоровочӗсене» те, хӑнӑхнӑ йӑлапа, вӑйӑ теме тытӑннӑ, Кама леш енчи чӑвашсем ӑна уяв теҫҫӗ.

Е.А. Ягафова Самар хутлӑхӗнчи тата Тутарстанри Ҫарӑмсан тӑрӑхӗнчи чӑвашсен уяв йӑли-йӗркине тарӑннӑн тишкернӗ. Вӑл хӑйӗн ӗҫӗнче ҫак шухӑша палӑртать: «*Уяв*, пӗр енчен, ҫинҫепе пӗр пӗлтерӗшлӗ, тепӗр енчен – *вӑййӑпа*. Асӑннӑ термин икӗ ӑнлава палӑртнӑ. «Уяв» сӑмахпа усӑ курнӑ тӑрӑхра «Ҫинҫе» тата «Вӑйӑ» сӑмахсем тӗл пулмаҫҫӗ. Самар тӑрӑхӗнчи Тӑварма (Тӑварӑм), Ухинккел, Питтӑпаль, Ӑрсиел ялӗсенче Ҫинҫе умӗн юн кун Акатуй е Сапантуй ирттереҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Ҫарӑмсан тӑрӑхӗнчи ялсенче Акатуй пирки пӗлмеҫҫӗ, кунта йӑлана кӗнӗ вӑйӑсене, утпа чупассине *уяв* вӑхӑтӗнче ирттереҫҫӗ. Унта каҫчен юрласа савӑнаҫҫӗ, вӑйӑ картине тӑраҫҫӗ. Унсӑр пуҫне тӗрлӗ ӑмӑрту та ирттереҫҫӗ» (Ягафова 1998: 219–221) .

*Ҫинҫепе уяв* терминсем пӗр пӗлтерӗшлӗ пулнине В.П. Никитин (Станьял) та ҫирӗплетет. «Пӗр тӑрӑхра ӑна «ҫинҫе», тепӗр ҫӗрте «уяв ятпа калаҫҫӗ», – тесе палӑртать вӑл (Никитин и Димитриева 2002: 136).

Вӑйӑ (уяв) юррисене Сӗве тӑрӑхӗнчи чӑвашсем *уяв юррисем*, *вӑйӑ юррисем*, *карталанса тӑрса утса ҫӳресе юрланисем* теҫҫӗ. Илемлӗ литературӑпа кулленхи калаҫура вӗсене вырӑнӑн-вырӑнӑн «ҫинҫе», «ҫимӗк», «ҫимӗк сӑввисем», «ҫимӗк сӑвви-юррисем», «Микулапа Троица» е «весна юррисем» тени те тӗл пулать. Чӑвашсен ҫак йӑли пур ҫӗрте те хӑйне евӗр иртнӗ, тӗрлӗ ятсемпе ҫӳренӗ. Вирьялсем (турисем) «вӑйӑ» е «похӑ» тенӗ, анат енчисем «вӑйӑ», анатрисем ытларах «уяв» теҫҫӗ.

Чӑваш Республикинчи районӗсенче ҫамрӑксем савӑнма пухӑнакан уява тӗрлӗрен ятпа палӑртаҫҫӗ: *похӑ, тапӑ, ейӗн.* Тӗпчевҫӗсем *тапӑ* сӑмахӑн пӗлтерӗшӗпе пулӑвне тӗрлӗрен ӑнлантарнӑ. Н.И. Ашмарин хӑйӗн словарӗнче *тапӑ* пирки ҫапла каланӑ: «*Тапӑ* – ҫуркунне, ҫурхи ака пӗтиччен. Тапӑ кунӗ аксан, тырӑ пулмасть. Унта каччӑсем, хӗрсем, ватӑ ҫынсем, ватӑ арӑмсем курма

тухаççĕ. Сăра, эрек сутаççĕ. Пĕремĕк, кăнафит, хĕвел-çармăш сутма кăлараççĕ. Апат çисе, тумланса тухаççĕ, кăнтăрлара, кăнтăрла иртсен саланаççĕ. Хĕрсем ĕретпе ăрампа тăраççĕ, пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, каччăсемпе паллашаççĕ» (Ашмарин 1937: 194).

К.В. Эллен ЧПГĂИ фондĕнче упранакан ал çырăвĕнче *тапă* сăмахăн пĕлтерĕшне çапла уçса панă: «Тапă» сăмах, преданисем тăрăх, «тапăр» сăмахран пуçланса кайнă. Тапăра та кăнтăрла выльăхсем ĕçсе канма анаççĕ – таппа та». Урăхла ăнлантарни те пур (ЧПГĂИ ĂА. I. 619. 9043: 95–96).

Тапă – вăлах *похă, ейĕн*, *хупах* – çулталăкра пĕрре пулакан аслă вăйă. Ĕлĕкхи вăхăтра çурхи ĕçсем вĕçленсен кашни община (пĕр кăкран хунаса тухнă ялсем) пĕр ялĕнче *пухă* («собрание, сўезд») ирттернĕ. Унта ял пуçĕсем, ватăсем община пурнăçĕнче тухса тăнă пысăк ыйтусене сўтсе явнă, кайран тăвансем патĕнче кĕрекере ларнă, тĕпри ватăсене асăннă.

Тапăра (похăра) ял пуçĕсене суйласа лартнă. Суйлав йĕрки авалах çирĕпленнĕ, вăл чăвашсен мăн аслашшĕсем юркăн пурнăçпа пурăннă вăхăтранах килет. Тапăра акатуй ирттернĕ (тĕрĕссипе, *тапă* та, *ака туйĕ* те – пĕр япалах) – çынсем чупса, сиксе, кĕрешсе, тĕл персе, ут ярса ăмăртнă, çĕнтерўçĕн вăй-халне çеç мар, ăс-тăн çивĕчлĕхне те сăнанă. Мала тухнине пуçлăха лартнă. Çамрăксем çак хушăра аслă *вăйă* ирттернĕ. Ку уяв каççерен иртекен вăйă пекех, анчах таппа таврари ялсенчи çамрăксем те пуçтарăннă.

Чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарнă хыççăн ĕлĕкхи вунсем вырăнне прихутсем пулса тăнă. Вара тапăсене чиркў (престол) уявĕсем вăхăтĕнче ирттерме тытăннă. Ĕлĕк таппа пухăнсан тĕпре выртакансене хывнă. Çавăнпа тĕне кĕнĕ хыççăн тапăсем нумай çĕрте çимĕкпе, Тройцăпа пĕрлешсе кайнă. Авалхи тапă вырăнĕсенче каярахпа пасарсем, ярмăрккасем ирттерме пуçланă.

Çамрăксен уявĕсене тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕ ятпа палăртнă. Тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи Чăнкасси тăрăхĕнчи яш-кĕрĕм Энĕш улăхĕнче *Кушар* ирттернĕ, Вăрмар районĕнчи Пăртас çамрăкĕсем сала çумĕнче *Вăййа* пухăннă. Çĕрпў районĕнчи Кĕсер шывĕ урлă хывнă Дворник кĕперĕ çинче иртекен уява *Тварник таппи* тенĕ.

ХХ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен иккĕмĕш çурриччен Çĕрпў тăрăхĕнчи мĕнпур Туçа (Хурамал Туçа, Кĕлейкасси Туçа, Çирĕкасси Туçа, Чечейкасси Туçа, Упнер Туçа, Чăрăш Туçа, Ĕмпĕрт Туçа) ялĕсенчи çамрăксем çимĕк умĕн *Хупах таппине* пуçтарăннă. Халăхра тапă вырăнне те, вăхăтне те *Хупах* тенĕ. Çав уяв Чечейкасси ялĕ çумĕнчи *Тиснер тăвайккинче Хĕр киремечĕ* текен вырăнта иртнĕ. Таппа пынă яш-кĕрĕм пĕр-пĕринпе паллашнă, туслă пулма сăмах татнă. Çакă тапăн тĕп пĕлтерĕшĕ пулнă. Авланман каччăсем хăйсем валли хĕр куçласа хунă. Çамрăксем пĕр-пĕринпе паллашса çемье çавăрма тĕв тунă, кĕр мăнтăрĕпе туй ирттернĕ. Çак шухăша В.Г. Родионов та палăртать (Родионов 1990: 13).

Халăх çĕре хисеплесе чару (табу) йĕркине хытă пăхăннă. Çав тапхăрта ача-пăчана ашкăнма çеç мар, выляма та чарнă. «Çинçе чухне вылясан, кулсан, шăхăрсан, купăс-мĕн каласан, тырă пулмасть тенĕ» (Ашмарин, 1994: 163). «Çинçере арçынсемпе хĕрарăмсем пурте шурă тум тăхăннă, ниçта та çўремен, килте, кил таврашĕнче вăхăта ирттернĕ. Арçынсем урама тухса ларса юмах-халап çапнă. Кăнтăрла юрлама та чарнă, çавăнпа вăйă картине çамрăксем каçхине çеç тухнă. Уяв пуçлансан, пĕтĕ çĕре вăйăсем вĕçленмесĕр те хускатма, амантма юраман» (Магницкий 1881: 35).

Чăвашсем ирттерекен вăййăпа тӳр килекен йăла-йӗрке Атăл тăрăхӗнчи ытти тӗрӗксен те пур: тутарсен вăл «джиен», пушкăртсен – «йыйын». Ку йăлана ислам тӗнне йышăннă пăлхарсем те тытса пынă. Хальхи *тапă, похă, ейӗн* («собрание») *акатуй, вăйă (*тут. *жиен, «джăйăн»* тесе вуламалла, вырăсла – «собрание, сборище»), *сапантуй* тенисем – пурте пӗр пулăма пӗлтереҫҫӗ.

Чăвашсемпе тутарсем йăлисене пӗр вăхăталла ирттернӗ. Тутарсем вӗсене пӗрлешӳллӗ хуҫалăхсем йӗркеличченех тытса пынă. Каярахпа джиен пӗчӗккӗн сӳнме пуҫланă. Юлашки вăхăтра сапантуй ирттересси вăя кӗрсе пырать.

Кӳршӗллӗ пурăнакан ҫармăс халăхӗн хӗрӗсемпе каччисем те ӗлӗк пӗр-пӗринпе Ҫимӗк эрнинче паллашнă. Ҫимӗк йăлине вӗсем чăвашсенчен йышăннă тесе калама пулать. Чăвашсем авалтанпах мăн асаттесемпе асаннесене асăнса Ҫимӗкре кивӗ масар ҫумӗнчи ҫаран ҫинче *вăйă* йӗркеленӗ. Чăваш тата ҫармăс ҫамрăкӗсем ку йăлана ватăсем (мăн асаттесем) леш тӗнчере савăнса пурăнччăр тесе ирттернӗ. Ҫимӗкре ваттисен чунӗсем ҫӗр ҫине, ку тӗнчене килеҫҫӗ тесе ӗненнӗ, вӗсене савăнтарма уяв пуҫланă, юрăсем юрланă.

**Вăйă (уяв) юррисен илемлӗхӗпе сăнарлăхӗ, вырăнӗпе пӗлтерӗшӗ**

Вăйă (уяв) юррисем янăравлă, ăшă туйăмлă, вӗсенче аваллăх ахрăмӗ илтӗнсе тăрать. Ку юрăсене ушкăнпа юрламалли юрăсем тенӗ. Уяв картине тăрса ҫаврăнса утнă чухне ытларах ҫыхăнуллă, тăсса юрламалли вăрăм юрă янăратнă. Ку кӗнекене икӗ тӗрлӗ юрăсем кӗнӗ: вăйă (игровые) юррисем тата уявра карталанса утса ҫӳренӗ чух юрланисем (вӗсене вырăссем «хороводные» теҫҫӗ). Вăйăсенче ҫамрăксем такмак пек тăватшар йӗркерен тăракан юрăсем юрланă. Кун пек текстсем нумай тӗл пулаҫҫӗ. Ҫимӗк сăввисем ҫавра юрăсене сывăх. Тăватшар еултшар йӗркеллӗскерсем пӗр-пӗринпе ҫыхăнса пыраҫҫӗ, кашнин хăйӗн вырăнӗ пур, вӗсене умлă-хыҫлăн калаҫҫӗ. Тӗпчевҫӗсем ҫавра юрăсене поэзилле афористикăпа – кӗске сюжетлăхпа ҫыхăнтараҫҫӗ, халăх вӗсене авалах ытти юрăсенчен уйăрнине палăртаҫҫӗ, чăваш культурин феноменӗ теҫҫӗ. М.Г. Кондратьев шучӗпе, ҫавра юрăсем тесе халăхăн тăват йӗркеллӗ юррисене калаҫҫӗ, вăл вӗсене афоризмла поэзи шутне кӗртет (Кондратьев 2002: 73).

Вăйă вăл пӗр тăрăхри ҫамрăксене пӗрлештерекен, ҫыхăнтаракан йăла. Вăйă пуҫламăшӗнче вӗсем алăран алă тытăнса, карталанса юрланă. Вăйă картине тăрса хуллен, васкамасăр утни – вăййăн пуҫламăш тапхăрӗ. Вăйă-кулă чуна йăпатать, савăнтарать ҫеҫ мар, яш-кӗрӗмӗн пултарулăхне те кăтартать: ҫамрăкăн вăйă пуҫлама, юрă юрлама, сăвă калама, ташлама пултармалла, халăха савăнтарма пӗлмелле пулнă. Уява хитре ирттерсе яла илем кӳме тăрăшнă. Вăййа хӗр-тантăш пухăнни сăнарлă ӳкерчӗк пулса куҫ умне тухса тăрать:

Пухăнтăмăр, ай тантăшсем,

Сар чӗресри, сар чӗресри, ай, хăйма пек. (Яковлев 1908: 8).

Вăйă пуҫлама уҫă талккăшра, уҫлăхра юрлама пултаракан уҫă, ҫинҫе саслă хӗре суйланă. Ҫавăн пек сасăллă ҫын кăна уяв пуҫлама пултарнă. Ҫапах та пӗр-пӗр каччă юрă пуҫланă тӗслӗхсем те пулкаланă.

Тиркӗ-тиркӗ йăвача,

Касмасăрах пулмас вăл,

Кӗвӗ пуҫласа каласси

Начар хĕртен пулмас вăл (ЧПГĂИ ĂА. I. 94: 127).

Кўршĕллĕ тутарсен вăйă ертўçи каччă пулнă: «Хурăн тавра вăйă карти пуçланă. Вăйла сасăллă тавçăрулла каччă вăйă ертўçи пулнă. Вăл хĕрсенчен тутăрсем, хăюсем пуçтарнă, вĕсемпе хурăна илемлетнĕ» (Уразманова 2001: 395).

Вăйă (уяв) юррисенче сăнарлă параллельлĕх тĕп вырăнта. Тытăмĕ енчен илсен çыхăнуллă пайсем уйрăлса тăмаççĕ. Сăнарлăх икĕ пайран тăрать: çут çанталăк тата çын пурнăçĕн ўкерчĕкĕсем. Малти пайĕ тĕп шухăша уçса пама пулăшать. Çамрăксем тавралăх чĕрĕлнишĕн, çурхи илемлĕ вăхăтсем, вăйă-кулă çитнишĕн савăннă, хăйсен шалти кăмăл-туйăмĕ çут çанталăк пулăмĕсемпе пĕрпекленсе пĕр кĕвĕллĕ пулнине палăртнă. Сăнарлă шухăшлавра чăваш çамрăкĕсен тĕнче курăмĕ уççăн палăрать. Пĕр ўкерчĕк тепĕр ўкерчĕкпе вĕçе-вĕçĕн çыхăнса аталанса пыни çак тĕслĕхре курăнать:

Çўллĕ-çўллĕ тусем пур,

Тусем çинче кўлĕсем пур,

Кўлĕсем çинче хурсем пур,

Хурсене кĕтен хĕрсем пур,

Хĕрсене куçлан ачи пур (ЧПГĂИ ĂА. III. 171: 101).

Çапах та юррăн тĕп шухăшĕ кунта мар, параллель пек пыракан йĕркесенче:

Урлă-пирлĕ çул килет,

Пĕр юппипе çын килет.

Эпир савни пĕри çук,

Эпир кĕтнĕ çынни çук,

Пире куçланă ачи çук (ЧПГĂИ ĂА. III. 171: 102).

Сăнарсем çапла пĕр-пĕринпе умлăн-хыçлăн çыхăнса тăнине темиçе юрăра та тĕл пулатпăр («И пус вылять, пус вылять», «Шур-шур тăрăх çўрерĕм» тата ыттисем те).

Тĕлĕнмелле хитре параллельсем вăйă юррисенче нумай тĕл пулаççĕ. Кĕскен çавăрса каланисем те, çаврана хирĕç çавра туса юрланисем те пур.

Вĕлтрен ухмах, хăй ухмах,

Карта çумне хăй шăтать.

Ваçça ухмах, хăй ухмах,

Урине хыççăн хăй чупать (Вдовина 1985: 45–46).

«Кĕтўре ырă ут вылять-çке» юрăра параллельсем уйрăмах сăнарлă. Пĕр çак юрра итленипех миçе тĕрлĕ ўкерчĕк куç умне тухса тăрать: шур курница умĕнче майра чĕнтĕр çыхни, улпут хура сăран çинче ылтăн суйлани, шап-шур кушма çинче манит суйлани. Юлашки йĕркесем вара тата çўллĕрех пусăмра тăракан шухăша калаççĕ те юрра вĕçлеççĕ: «Аслă вăйă варринче сарă ача сарă хĕр суйлать-çке».

Çурхи уява яш-кĕрĕм йышлăн хутшăннине кура унти вăйă-кулă репертуарĕ пуян та нумай енлĕ. Уяв юррисенче ытларах пейзажлă ўкерчĕк тĕл пулать. Юррисем хаваслă пулнă, чун-чĕрене çĕклентернĕ, çамрăксене савăнăç туйăмĕ кўнĕ. Вĕсенче тăван тавралăх илемне, тус юлташсен çирĕп туслăхне, таса юратăва мухтанă. Çак пайрăмсем уйрăмах «Чăн тўпере çич çăлтăр» юрăра палăраççĕ:

Чăн тўпере çич çăлтăр

Çиччĕшĕ те çут çăлтăр.

Пир(ĕ)н вăйăра çитмĕл хĕр,

Çитмĕлĕш те сарă хĕр (Яковлев 1908: 10).

Теми енчен пăхсан вăйă (уяв) юррисенче чăвашăн ĕмĕрхи хаклăхĕсем – ял çамрăкĕсен кулленхи пурнăçĕ, шăпа, телей, çурхи вăйă-кулă, юрату, хурлăхпа савăнăç, чыс; çут çанталăкри пулăмсен йĕркелĕхĕ; хĕрпе каччă хушшинчи хутшăнусем, ял-йышпа, кил-йышпа тата çут тĕнчепе çураçуллă пурнасси – тĕпре тăраççĕ. Тĕслĕхрен:

Айтăр, хĕрсем, выляма

Таса çерем тăршшĕне.

Халь выляни-кулнисем

Кайччăр ĕмĕр тăршшĕне (ЧПГĂИ ĂА. III. 982: 47).

Вăйă (уяв) юррисем темăпа е шухăшпа çеç мар, илемлĕх мелĕсемпе те пуян.

Чĕкеç чĕвлетни, чĕкеç чĕвлетни,

Чĕкеç чĕвлетни, чĕвлетни –

Çамрăк хĕрĕн калаçни, калаçни.

Шăнкăр-шăнкăрти, шăнкăр-шăнкăрти,

Шăнкăр-шăнкăр шыв юххи, шыв юххи –

Хĕр-упраçăн ташлани, ташлани…

(ЧПГĂИ ĂА. VI. 227: 197–198).

Ку тĕслĕхре тĕрлĕ сасă мала тухать: кайăк-кĕшĕк сасси, шыв сасси. Анлă танлаштарусем шутне çаксене кĕртме пулать: хĕр калаçни – чĕкеç чĕвлетни, хĕр-упраç ташлани – шăнкăр-шăнкăр шыв юххи, мăйăр сарри – сар çулçă… Вĕсем сăнарлă параллельĕх урлă та палăраççĕ. Йĕркесенче пĕр йышши хупă сасăсене калани (аллитераци) тĕл пулать: чĕкеç чĕвлетни, шăнкăр-шăнкăр шыв, тислĕк тăкнă çĕр. Пĕр йышши уçă сасăсем темиçе хут янăраççĕ (ассонанс): аслă, ырă хĕр, аслă, ырă хĕр. Чĕкеç чĕвлетни, шăнкăр-шăнкăр шыв, тислĕк тăкнă çĕр, шурă хур аçи, суйлăр хĕрсене юрă йĕркисем пĕр сăмах çаврăнăшĕнчен пуçланаççĕ (анафора). Чĕвлетни, ырă хĕр, сар ачи, мăйăрне, хĕрсене строфасенчи йĕркесем пĕр пек вĕçленеççĕ (эпифора). Харсăр сар ачи, пур енчен те маттур хĕрсем йышши тĕслĕхсем каччăпа хĕр хитрелĕхне уйăрса палăртаççĕ. Çавăн пекех

кашни йĕркере тенĕ пекех повторсем, кĕвĕленсе юхса пыракан сасăсен янăравлăхĕ, евĕрлев сăмахĕсем пурри юрра чĕрĕлĕх, сăнарлăх, янăравлăх кĕртет.

Вăйă репертуарĕнче тăрăхлавлă-шӳтлĕ юрăсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ: каччăсем хĕрсене тăрăхлаççĕ е хĕрĕсем каччисене витлеççĕ. Уявра юрату тата тăрăхлу пейĕчĕсем те юрланă. Ялпа ял, урампа урам хăйсене мала хурса, ăмăртса юрланă. Апла пулин те ют ялсен, ют кассен çамрăкĕсене (е вăййине те) тиркесе юрласси ячĕшĕн, йăлашăн пулса пынă. Кашни хăйĕн тăван ялне, урамне, хăй пĕлекен-паллакан тусĕсене çывăхрах курать, лайăхрах хаклать. Урам вăййисенче пĕр-пĕрне хурланă пулсан та аслă картана пухăнсан пĕрле савăннă.

Уява тухман çамрăксене тĕртсе каланă юрăсем те тĕл пулаççĕ. Ку юрăсенче халăхран юлмалла мар, пĕрле пулмалла текен шухăш тĕп вырăнта. Çапах та сăлтавĕ те тĕрлĕрен пулма пултарнă. Тен, хăш-пĕри уяв çи-пуçĕ пулманран вăййа тухма вăтаннă.

«Вăйă (уяв) юррисенче халăх драмин элеменчĕсем пур» (Димитриев 1998: 232–233). Вĕсенче калаçу формипе усă курнă юрăсем сахал мар тĕл пулаççĕ. Диалог юрăсем вăййа чĕрĕлĕхпе шухăлăх, шӳтпе кулăш кĕртеççĕ. Диалог юрăсем нумаях мар, çапах та пур. Вĕсенчен «Шĕлтĕр-шĕлтĕр урапа», «Айта, инке, сертене», «Тĕвик-тĕвик текерлĕк», «Эпир тулă акатпăр», «Ăçта каян, Кириле?» тата ытти юрăсене асăнма пулать.

Вăйă юррисенче çамрăксен уявĕн илемне, пĕлтерĕшне мухтасси, вăл мĕн таран хаклă пулнине палăртасси пур. Çак йăла çамрăклăхпа, вăхăта савăнăçлă ирттернĕ тапхăрпа çыхăннă. Юрăсенче вăйă вăхăтне йывăç-курăкпа, çаран çинчи сар чечекпе, мăкăнь акнă çĕрсемпе, шыв сассипе, çĕмĕрт çеçкипе, çаран çинчи çырлапа тата ыттисемпе те танлаштарнă. Вăйă йăлисем çамрăклăх мĕн тери хитре, хаклă пулнине кăтартса параççĕ. Çамрăкшăн вăйăра савнă çын, пĕрле ӳснĕ тантăшсем пулни тата та илемлĕрех, пĕлтерĕшлĕрех пек туйăнать.

Чĕрес-чĕрес çĕр çырли,

Татрăм çиес килнĕрен

Кĕçĕрхи çĕр çак вăййа

Тухрăм выляс килнĕрен (ЧПГĂИ ĂА. I. 173: 211).

Çавăн пекех юрăсенче халăхăн мифла тĕнче курăмĕ те палăрать. Текстсенче тĕнче модельне ӳкерсе кăтартасси, çӳлти тĕнче çинчен, йывăç (юпа) çинче ларакан кайăка (ама йывăç, вата асаттесемпе асаннесем), çĕр çинче савăнакан яш-кĕрĕме асăнасси пур. Çамрăксем хăйсен юррипе çут тĕнчене тав тăваççĕ, Турра мухтаççĕ, çĕр çинчи çынсем валли ырлăх ыйтаççĕ:

Çӳлте шевле вылять-çке –

Турă савăнса тăрать-çке;

Хирти ыраш пулать-çке,

Халăх савăнса тăрать-ĕçке.

Эпир вăййа тухсассăн,

Турă илтсе тăрать-ĕçке (Ашмарин 1982: 18).

Вăйă (уяв) юррисем ытти юрăсенчен раснарах. Вĕсем уяв (вăйă) кĕввипе уйрăлса тăнине В.Г. Родионов та çырать (Родионов 1992: 78).

Вăйă юррисем сасă кĕвĕлĕхĕпе те илемлĕ. Сăмах, сыпăк, сасă повторĕ пурри, янăравлă сасăсене темиçе хут калани хаваслă, çĕкленӳллĕ туйăма палăртма кирлĕ:

Сар**ă** пурç**ă**нтан с**а**ра турă**м**.

Уяв кунĕ çыхм**а**шк**ă**н,

С**а**р**ă** **а**ч**а**на тус турă**м**

Уяв ка**ç**ĕ выляма ( ЧПГĂИ ĂА. VI. 16: 67).

Ку тĕслĕхре сарă сăмах пĕрре тĕсе, тепре хĕрсен капăрлăх хатĕрне, илемлĕхе пĕлтерет. Ку сăмах аллитерацие ассонанса палăртма кирлĕ.

Уйрăм тĕслĕхсенче ытармалла мар танлаштарусем тĕл пулаççĕ:

**Ç**ыр хĕрринчи **ç**ырла **эп**,

**Ç**авăнпа та **ç**ырă **эп**.

**Ç**аран çинчи **çе**çке **эп**,

**Ç**авăнпа та **ç**емçе **эп**.

**П**арлак çинчи **п**алан **эп**,

**Ç**авăнпа та **п**аллă **эп**.

**Ç**ул хĕрринчи **ç**ирĕк **эп**,

**Ç**авăнпа та **ç**ирĕп **эп**.

**А**тте-**а**нне **а**чи **эп**,

**Ç**авăнпа та **а**чаш **эп**.

**Ш**уйханмасăр ӳснĕ эп,

**Ç**авăнпа та **ш**ухă **эп** (ЧПГĂИ ĂА. III. 221: 228).

Ку тĕслĕхре «ç» сасă çине-çине янăрани юрра çепĕçлĕх кӳрет. Танлаштарăвĕсем илемлĕ те вырăнлă. Темиçе ĕмĕр янăраса якалса çитнĕ (пиçсе çитнĕ) юрă пулни тӳрех курăнать. Пĕр пек хупă е уçă сасăсем çине-çинех илтĕнекен тĕслĕхсене темĕн чухлех тупса пама пулать. «Тиек йытти тил тытать те», «Тайлăма йĕтĕн актартăм талай тутри тумашкăн», «Атăл çинче аллă хур», «Çӳлте çутă çăлтăрсем» тата ыттисем те. Халăх пултарулăхĕ пысăк шайра пулни вĕсем тăрăхах курăнать.

Вăйăра качча каякан хĕрсене ăсатнă, вĕсен ячĕпе ятарласа юрăсем хывнă. Ăсату юррисем хĕр йĕррине çывăх, вĕсем хĕрарăмăн ĕлĕкхи йывăр пурнăçне сăнласа кăтартаççĕ:

Пирĕн пек çамрăк хĕрачасем

Тĕнче хуйхишĕн çуралнă.

Тĕнче хуйхи вăрлăхĕ –

Пĕтĕм этем хуйăхĕ (Иванов 1962: 13).

Хĕрсем уява тухсан «качча кайнă арăмсен тути усăнать», хĕрсем уявран кĕрсен «арăмсен тути тӳрленет» йышши тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ. Кун йышши юрăсенче арăмсем хĕрсене ăмсанни, иртсе кайнă çамрăк ĕмĕршĕн пăшăрханни курăнать.

Çакăнта палăртнă илемлĕх мелĕсем ĕçпе йăла, тăванлăхпа туслăх, юрату юррисенче те пур. Вăйă юррисен уйрăмлăхне тематикăра, уява тухмалăх ӳссе çитнĕ яш-кĕрĕмĕн шухăшлавĕнче шырамалла. Мĕн пĕчĕкрен ĕçпе ӳсекен чăвашсем хĕрпе каччă çулне çитнĕ тĕлелле пурнăçри хурашурра уйăракан пулса çите пынă. Çамрăклăх, юрату, туслăх темисем тĕп вырăнта пулин те, вăйă (уяв) юррисенче пурнăç çинчен шухăшлани сисĕнет. Пуяннипе чухăнни пурнăçра та тан мар, вăйăра та хăйсене тĕрлĕрен тытаççĕ. Пуç каçăртакан, хăйсене мăнна хуракан хĕрсемпе каччăсене сивлесе е асăрхаттарса каланă юрăсем тĕл пулаççĕ. Çавăн пекех ку йĕркесенче чухăн хĕрĕ пулсан та хăй хакне çухатас теменни, пуян хĕрĕн мăшкăлĕ пулас марччĕ тени курăнать.

Ламра кĕтӳ кĕтеççĕ,

Ула ĕне хутшăнмасть.

Аслă урамра вăй выляççĕ,

Пуян хĕрĕ хутшăнмасть.

Пуян хĕрĕ пушмаклă,

Вăл пушмаклă пулин те

Ура йĕрне пустармăп.

…. Çынран уйрăм çӳреме,

Пуян хĕрĕ мар эпир (ЧПГĂИ ĂА. III. 435: 168).

Вăйă картине тăрсан самана йывăрри çинчен манма тăрăшнă. Апла пулин те сайра-хутра пусăрăнчăк шухăшлă текстсем тĕл пулаççĕ. Чăваш мĕн авалтанпах ял-йыш, халăх шухăшкăмăлне, йăли-йĕркине шута илсе пурăннă. Унăн характерĕнче, тыткаларăшĕнче малти вырăна çын мĕн калать тени, ял-йыш умĕнче ята ярас теменни кăмăл-сипете таса тытма хистенĕ. Çамрăксен юррисенче çын сăмахĕнчен, халăх тиркевĕнчен хăрарах тăни сисĕнет. Сăлтавсăр усал ят илтнишĕн кӳренни те пур.

Çын ачисем пире ай çиеççĕ,

Хăйсем мĕн курасса ай пĕлмеççĕ.

(ЧПГĂИ ĂА. V. 356: 21).

Кун пек пăшăрханулла юрăсем нумаях мар, çапах та пур. Тĕп шухăш: пĕр-пĕрин хушшинчи ырă хутшăнусене, çураçулăхпа килĕшĕве упрамалла, мĕншĕн тесен пурнăç темле те çаврăнса кайма пултарать.

Анаталла анмалла,

Тăвалла хăпармалла.

Пĕрне-пĕри хыт ан калăр –

Малашне тем курмалла (ЧПГĂИ ĂА. III. 187: 66).

Вăйă çамрăксене мăшăр суйлама май туса парать терĕмĕр маларах. Юрă тексчĕсенче çемьене, ĕрчевлĕхе палăртакан символсем пур: сурăх, ĕне, лаша е ут кĕтĕвĕсем. Куккук, шăпчăк йышши кайăк ячĕсем вăхăт пĕлтерĕшне палăртаççĕ. Малтанах юрăра вĕсем савăк вăйă вăхăчĕ çитнине пĕлтереççĕ. Каярах вăйă вĕçленнине систерсе куккук авăтма, шăпчăк юрлама пăрахать. Çамрăклăха тавăраймăн, вăйă пĕр иртсен тепĕр çулсăр та килмест, çавăнпа та вăхăчĕпе савăнса юлмалла тесе каласшăн.

Анат енчи вăйă юррисем анатрисенчен урăхларах. Анатри чăвашсем уяв юррисене тăсарах, лăпкăн,васкамасăр юрлаççĕ. Юрă пуçламăшне пĕр сасăпа, хушса юрламаллине икĕ сасăпа, хăш чухне виçĕ сасăпа та юрлаççĕ. Чăвашсем хушшинче темиçе сасăпа юрланине уяв вăхăтĕнче ытти чухнехинчен ытларах илтме май пулнă. Темиçе сасăпа юрласси вырăссенчен кĕрсе юлнă. Ытти уявсем вăхăтĕнче темиçе сасăпа юрласси питех аталанман. Анат енчи вăйă юррисем кĕскерех, формипе вĕсем такмаксене çывăх. Кĕввисенче тăсса юрламалли сыпăксем сахалрах е пулмасан та пултараççĕ.

Чăвашсем уяв-вăйă юррисенче асамлă вăй-хăват пур тесе шутланă. Вĕсене тĕлсĕр юрлама юраман. Вăййа пĕлсе пуçласа тивĕçлĕ ăсатса ямалла пулнă. Уява ăсатсан унăн кĕввисене, сăввисене çитес çулччен каламан. Ку вăл хăйне евĕр чару (табу) пулнă. Çакна пăхăнмасан, çын тытнă ĕçне вĕçлеймест, ывăнать, чирлет, килти выльăха усал çулăхать тенĕ.

Çурхи уяв вăхăтĕнче такмак каласа ташласси ытларах вирьялсен тата анат енчисен аталаннă. Анатрисем сăвă каланă, уяв юррисем юрланă. XIX–XX ĕмĕрсенче çырса илнĕ юрăсенче кӳршĕ халăхсен витĕмĕ чылай палăрать. Ку вăл хăш чухне тӳррĕн куçарса юрланинче, уйрăм сыпăксене хушма çавра пек кĕртсе каланинче е сюжетсемпе сăнарсене хăйне май çĕнетсе кĕртнинче сисĕнет. Халăхсем хушшинче анлă сарăлнă вăйă юррисенчен пĕри – «Çерем пăсса вир акрăм». Ку юррăн варианчĕ тĕрлĕ халăхсен тĕл пулать. Вырăссен авалхи «Просо» юррине çывăх. Юрăри шухăш-сăнарпа кĕвĕ-çемĕ халăхăмăрăн ăс-хакăл илемне упраса хăварнă. Вăйă вăхăтĕнче юрă татăлман. Кашни вăййăн хăйĕн илемĕ, кĕвви-юррисем пур. Ĕçчен те чипер пулма вĕрентекен юрăсем вĕсем.

Кашни юрăпа çамрăксем хăйне евĕрлĕ ӳкерчĕк туса çаврăннă. Çĕр-ама пĕтĕ пулнине хисеплесе хĕрсем тăпăртатман, урисемпе çĕре тапман, акăш пек шуса çеç пынă. Аллисем кăкăртан çӳле çĕкленмен. Шухă теесрен хĕр алăпа каччăна çеç мар, хăйĕн пилĕкне те тытмасть. Сăпайлă хĕршĕн вăрах ташлани те килĕшӳсĕр, пĕр-ик çаврăмран вăл хăй вырăнне кайса тăрать. Яш каччăсемшĕн чарусем çук темелле. Вĕсен ташши хăйсем пекех чăрсăр, хĕрӳллĕ. Аллисене сулса, пуçĕсене ухса, урисене тапса сикеççĕ.

Улах юррисемпе вăйă юррисем нумай енчен пĕр евĕрлĕрех. Вĕсене те çамрăксем шăрантараççĕ. Улах юррисене ытларах хĕрсем юрлаççĕ, вăйă юррисене юрлама е выляма каччăсем те хутшăнаççĕ.

Çурхи юрра карталанса çаврăнса юрламалли юрăсем йышлă тĕл пулаççĕ. Вĕсем çаксем: «Хурăн çулçă çурсассăн», «Çĕмĕрт çеçки çурăлать те», «Йĕс таканлă аттăр пур», «Олту», «Пиçнĕ-пиçмен çырлашăн», «Çӳл ту çинче хурăнлăх», «Çырма хĕрне ансассăн», «Тӳттĕл-тӳттĕл», «Пахчи-пахчи» тата ыттисем те.

Вăйă вăхăтĕнче çамрăксем выляна, кулнă, юрланă, ташланă. Вĕсем ырлăх панăшăн çут çанталăка çапла тав тунă. Чăваш вăййин пуянлăхне йĕркипе сыпăнтарса пырсан тĕлĕнмелле балет та, опера

та пулса тухĕччĕ. Халăхăн çурхи уяв вăййи-куллине этнографсем пысăка хурса хакланă. Вырăс çыравçи Н.Г. Гарин-Михайловский 1900 çулта хальхи Пушкăрт Республикине кĕрекен Парашино (Аксаково) ялĕнчи чăваш çамрăкĕсем çуркунне юмахри пек илемлĕ, асамлă уяв картинче вăйă ирттернине, юрăсем юрланине оперăсенчен мала хурса хаклать. Акă мĕнле çырса хăварнă вăл уяв пирки: «…Хĕрсем алла-аллăн тытăнчĕç те пысăк вăйă карти туса юрла пуçларĕç: вĕсен юрри те, вăййи те тĕлĕнмелле илемлĕ-мĕн, ун пеккине эпĕ ĕмĕрне илтмен те, курман та. Ĕнтĕ сцена çинче, балетра, операра куркалана. Анчах ку балет та, опера та мар, ку вăл – пурнăç. Пысăк вăйă карти тикĕссĕн те хуллен шăвать; хĕрсем пĕр-пĕрин хыççăн çурма айăккăн çаврăнса утаççĕ. Пĕр утăмне пысăккăн ярса пусаççĕ, вара тăп чарăнса тăраççĕ те тепĕр урине ерипен сиктереççĕ. Сцена çинче вăл, тен, пуçран шухăшласа кăларнă япала пек туйăннă пулĕччĕ – кунта вара çав çамрăк весталкăсен вăййи калама çук илемлĕ те чăннăн курăнчĕ» (Гарин-Михайловский 2009: 150–151). Автор çырнă тăрăх, чăвашсем çурхи вăйăра çӳлти турра, çĕр-аннемĕре тата вĕсен хĕрне мухтаса юрланине палăртаççĕ. Çак шухăша вырăс çыравçи «Зора» (Сарпи) драмăра та калать (Гарин-Михайловский 2009: 156–160). Çав кăмăл паллисем хăш-пĕр юрă текстĕнче хальччченех упранса юлнă.

Анатри чăвашсен куççуль тухиччен чуна хускатакан вăййине И.Я. Яковлев та курнă, вăл ăна авалхи эллинсен театрĕпе танлаштарнă.

Ънерçĕсем ĕлĕк те, халĕ те вăйă картине сăнлама юратаççĕ. Картинисенче чăваш çамрăкĕсен чысĕ, тирпейлĕхĕ, нумай енлĕ ăсталăхĕ курăнса тăрать. Вăйă (уяв) чăваш халăхĕн авалтан килекен культури. Вăл пуриншĕн те паха тĕслĕх, пултарулăх çыннисемшĕн – хавхалану çăлкуçĕ. А. Миттов, В. Агеев, Н. Енилин ўнерçĕсен ĕçĕсенче вăл чăваш тĕнчи пек уççăн курăнать.

Хальхи вăхăтра пурнăç, çынсен шухăш-кăмăлĕ улшăннă май ĕлĕкхи йăласемпе уявсенчен чылайăшĕ манăçа тухса пыраççĕ пулин те чăваш яш-кĕрĕмĕн вăййи сӳнмен-ха. Авалхи юрăсемпе кĕвĕсем, вăйă-уяв паянхи кунччченех хăйсен ытарайми поэзине, илемне çухатмаççĕ.

Совет тытăмĕ авалхи йăласене ирттерме чарса тăнă. Тăван çĕршывăн аслă вăрçи хыççăн çурхи-çуллахи вăйă йăли-йĕрки сӳнсе пыма тытăннă. Çакă нумай йĕкĕт вăрçă хирĕнчен таврăнайманнипе те çыхăннă-тăр. Хальхи вăхăтра З.А. Козлова ертсе пыракан «Уяв» ушкăн вăйă (уяв) юррисене илемлетсе юрлать. Чăваш Республикин Елчĕк районĕн Çирĕклĕ Шăхалĕнче Питравра вăйă ăсатас йăлана паянхи кун та ирттереççĕ. Хĕрсене сурăх кĕтĕвĕ витĕр кăлараççĕ. Ку йăла-йĕркене хĕрсем качча тухсан йышлă ача-пăчаллă пулччăр тесе тăваççĕ. Йĕпреç районĕнчи Пучинке ялĕнче те вăйă йăли-йĕркине çĕнĕлле чĕртсе ярас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Тутарстанри Нурлатра кашни çулах пĕтĕм Раççейри чăвашсен Уявĕ иртет. Кашни ял хăйĕн пултарулăх ушкăнĕпе сцена çине тухать. Авалхи йăла-йĕркене пăхăнса çĕре чавса хурăн туни лартаççĕ, ун тавра çаврăнса юрăсем юрлаççĕ.

Уяв йăли-йĕрки чăваш халăхĕн культура, наци хăй евĕрлĕхне ламран лама парса пыма пулăшать. Çухатас марччĕ пирĕн çак пысăк пуянлăха.

**Усă курнă литература**

Ашмарин, Н. И. (1982). “Очерк народной поэзии у чуваш”. *Этнографическое обозрение* № 2-3.

Ашмарин, Н.И. (1928). *Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Словарь чувашского языка. Вып. I– XVII.* Казань – Чебоксары.

Вдовина, И. (1970). *Юрă – чун уççи* / Ум сăмахĕ Ю.А. Илюхинăн. Шупашкар: ЧНТИ, 56 с.

Гарин,-Михайловский (2009). “Н.Г. В сутолоке провинциальной жизни”. *Русские писатели о чувашах: Сб. произведений*. Чебоксары, 2009. 150–151 с.

Гарин, Михайловский Н.Г. Зора // *Русские писатели о чувашах: Сб. произведений*. Чебоксары, 156–160 с.

Димитриева, Н.И. (2002). Никитин В.П., Кудрявцева С.М. Мир чувашской культуры (древняя история и духовное наследие этноса). Учебное пособие для образовательных учреждений Самарской области с полиэтнокультурным компонентом обучения. Чебоксары: ЧГИГН, С. 136.

Дмитриев, И.А. (1998). *Этнотеатральные формы в чувашском обряде*. Чебоксары, 280 с.

Егоров, В.Г. (1964). *Этимологический словарь чувашского языка*. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 356 с.

Иванов, Н.И. (1962). *Чăваш халăх юррисем*. Шупашкар, 324 с

Йохан, Хейзинга (2011). *Опыт определения игрового элемента культуры*. СПб: Изд-во Ивана Лимбаха.

Комиссаров, Г.И. (2003). *О чувашах: Исследования. Воспоминания. Дневники, письма* / Сост. и примеч. В.Г. Родионова; Предисловие Л.П. Куракова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 528 с.

Кондратьев, М.Г. (2002). “О типологических основах сюжетосложения чувашских народных песен”. *Проблемы изучения научного наследия Н.В. Никольского: Материалы конференции, посвященной 120-летию со дня рождения ученого*. – Чебоксары: ЧГИГН, С. 68–101.

Магницкий, В.К. (1881). *Материалы к объяснению старой чувашской веры. Собраны в некоторых местностях Казанской губернии В. Магницким, членом-сотрудником Казанского ИОАИЭ*. Казань: Типография Императорского ун-та, 268 с.

Родионов, В.Г. (1990). “О системе чувашских языческих обрядов”. *Чувашская народная поэзия. Сборник статей*. Чебоксары, 1990. С. 3–64.

Родионов, В.Г. (1992). *Чувашский стих: Проблемы становления и* развития. Чебоксары: Чуваш. кн. изд.-во, 224 с.

Уразманова, Р.К. (2011). “Весенне-летний цикл обрядов и праздников” *Татары*. М.: Наука, 538 с.

Федотов, М.Р. (1996). *Этимологический словарь чувашского языка. В 2-х тт. Т. 2. С–Я.* Чебоксары: Чувашский государственный институт гуманитарных наук. 509 с.

*ЧПГĂИ ĂА* — Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕ. Кĕскетнĕ ят хыççăнхи малтанхи цифра ăслăлăх архивĕн уйрăмне, иккĕмĕшĕ управ единицине, виççĕмĕшĕ страницине пĕлтерет.

Ягафова, Е.А. (1998). Самарские чуваши. (историко-этнографические очерки). Конец XVII – начало XX вв. Самара, 368 с.

Яковлев, И.Я. (1908) *Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним Часть I.* Симбирск. 1908